28-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1945
АВГУСТ
3
ЭРНЕКУН
143(6899) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) Обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн, ЧАССР Верховный Совечĕн тата Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

СССР Совнаркомĕнче

ОБЛАÇСЕН, КРАЙСЕН ТАТА РЕСПУБЛИКĂСЕН 1945 ÇУЛТА ÇУРАКИ ВĂХĂТĔНЧИ ЯЛХУÇАЛĂХ ĔÇĔСЕН ПЛАННЕ ТУЛТАРАССИШĔН ТАТА КОЛХОЗСЕНЧЕ ВЫЛЬĂХ-ЧĔРЛĔХ ĔРЧЕТЕС ĔÇЕ ВĂЙЛАТАССИШĔН ПЫРАКАН ПĔТĔМ СОЮЗРИ СОЦИАЛИЗМЛĂ ĂМĂРТĂВĔН ИТОГĔСЕМ

Облаçсен, крайсен тата республикăсен 1945 çулта çураки вăхăтĕнчи ялхуçалăх ĕçĕсен планне тултарассишĕн тата колхозсенче выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе вăйлатассишĕн пыракан Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвĕн итогĕсене пăхса тухса, ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ, çураки вăхăтĕнчи ĕç планĕсене тултарса тата иртterсе тултарса, кăçалхи июнĕн 1-мĕшĕ тĕлне палăртнă тăрăх, выльăх-чĕрлĕхе лайăх хĕл каçарса малалла çитĕнтерсе пырса, социализмлă ăмăртура çак облаçсем, крайсем тата республикăсем мала тухнă тесе йышăннă:

Çураки вăхăтĕнчи ялхуçалăх ĕçĕсен планне тултарассишĕн пынă ăмăрту енĕпе

1. Оборонăн Государственный Комитечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне тата укçаллă пĕрремĕш премисене Мускав облаçĕпе Украина ССР-ĕн Киев облаçне памалла тунă.

Оборонăн Государственный Комитечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне тата укçаллă иккĕмĕш премисене Ленинград, Псков, Калинин облаçĕсене, Украина ССР-ĕн Полтава облаçне тата Алтай крайне памалла тунă.

2. Узбек, Молдави, Белорусси, Карел-Финн, Грузин, Азербайджан, Казах, Латви, Литва, Эстони ССР-сем, Чăваш, Башкир, Якут АССР-ĕсем, Вологда, Архангельск, Новгород, Брянск, Владимир, Иваново, Ярославль, Великие Луки, Орел, Горький, Рязань, Курск, Калуга, Смоленск, Кострома, Иркутск, Кемерово, Чкалов, Воронеж, Крым облаçĕсем, Украина ССР-ĕн Сталино, Днепропетровск, Харьков, Кировоград облаçĕсем тата Ставрополь крайĕ çуракине лайăх ирттернине палăртнă.

Колхозсенче выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе вăйлатассишĕн пыракан ăмăрту енĕпе

1. Оборонăн Государственный Комитечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне тата укçаллă пĕрремĕш премисене Мускавпа Сталинград облаçĕсене памалла тунă.

Оборонăн Государственный Комитечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне тата укçаллă иккĕмĕш премисене Свердловск, Омск, Ростов, Калинин облаçĕсене тата Казах ССР-ĕн Гурьев облаçне памалла тунă.

2. Армян ССР-ĕ, Дагестан, Нахичеван АССР-ĕсем, Саратов, Астрахань, Челябинск, Новосибирск, Курган, Тула, Чкалов, Воронеж облаçĕсем, Украина ССР-ĕн Сталино облаçĕ, Казах ССР-ĕн Хĕвеланăç-Казахстан, Караганда облаçĕсем, Краснодар крайĕ колхозра выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе лайăх ĕçленине палăртнă.

РАЙОНСЕН 1945 ÇУЛТА ÇУРАКИ ВĂХĂТĔНЧИ ĔÇСЕН ПЛАННЕ ТУЛТАРАССИШĔН ТАТА КОЛХОЗСЕНЧЕ ВЫЛЬĂХ-ЧĔРЛĔХ ĔРЧЕТЕС ĔÇЕ ВĂЙЛАТАССИШĔН ПЫРАКАН ПĔТĔМ СОЮЗРИ СОЦИАЛИЗМЛĂ ĂМĂРТĂВĔН ИТОГĔСЕМ ÇИНЧЕН

Районсен 1945 çулта çураки вăхăтĕнчи ялхуçалăх ĕçĕсен планне тултарассишĕн тата колхозсенче выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе вăйлатассишĕн пыракан Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвĕн итогĕсене пăхса тухса, ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çураки вăхăтĕнчи ĕçсен планне тултарнăшăн тата ирттерсе тултарнăшăн, кăçалхи июнĕн 1-мĕш тĕлне палăртнă тăрăх, выльăх-чĕрлĕхе лайăх хĕл каçарса малалла çитĕнтерсе пынăшăн социализмлă ăмăртура çак районсем мала тухнă тесе йышăннă:

Çураки вăхăтĕнчи ялхуçалăх ĕçĕсен планне тултарассишĕн пынă ăмăрту енĕпе

Оборонăн Государственный Комитечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне тата укçаллă премисене çак районсене пама йышăннă:

Мускав облаçĕнчи Дмитров районне, Горький облаçĕнчи Богородск районне, Рязань облаçĕнчи Рыбное районне, Калуга облаçĕнчи Боровски районне, Ярославль облаçĕнчи Рязанцевски района, Владимир облаçĕнчи Муром районне, Вологда облаçĕнчи Череповец районне, Ленинград облаçĕнчи Луга районне, Башкир АССР-ĕнчи Альшеевски района, Казах ССР-ĕн Джамбул облаçĕнчи Чуйски района, Казах ССР-ĕн Караганда облаçĕнчи Осакарски района, Кемерово облаçĕнчи Гурьевски района, Ростов облаçĕнчи Сальск районне, Краснодар крайĕнчи Павловски района, Ставрополь крайĕнчи Молотовски района, Курск облаçĕнчи Больше-Троицки района, Украина ССР-ĕн Кировоград облаçĕнчи Чигирин районне, Украина ССР-ĕн Сталино облаçĕнчи Красноармейское районне, Азербайджан ССР-ĕнчи Агдам районне, Латви ССР-ĕнчи Илуксте уездне.

Колхозсенче выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе вăйлатассишĕн пыракан ăмăрту енĕпе

Оборонăн Государственный Комитечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне тата укçаллă премисене çак районсене пама йышăннă:

Мускав облаçĕнчи Кунцево районне, Калинин облаçĕнчи Старица районне, Тула облаçĕнчи Болохово районне, Тутар АССР-ĕнчи Бугульма районне, Чăваш АССР-ĕнчи Шăхасан районне, Сталинград облаçĕнчи Кагановичски района, Астрахань облаçĕнчи Сасыкольски района, Украина ССР-ĕн Днепропетровск облаçĕнчи Васильковски района, Украина ССР-ĕн Сталино облаçĕнчи Селидовски района, Казах ССР-ĕн Гурьев облаçĕнчи Новобогаткинское районне, Свердлов облаçĕнчи Покровское районне, Казах ССР-ĕн Хĕвеланăç Казахстан облаçĕнчи Джангалински района, Ростов облаçĕнчи Глубокий районне, Дагестан АССР-ĕнчи Лакски района, Ставрополь крайĕнчи Буденновск районне, Азербайджан ССР-ĕнчи Талузски района, Армян ССР-ĕнчи Калинино районне, Туркмен ССР-ĕн Ташауз облаçĕнчи Дарганатински района, Новосибирск облаçĕнчи Кыштовски района, Красноярск крайĕнчи Уярски района.

Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕнче

ЧĂВАШ АССР-ĕнчи КОЛХОЗСЕМПЕ СОВХОЗСЕНЧЕ 1945 ÇУЛТА КĔРХИ ТЫРĂСЕМ АКСА ХĂВАРАССИ ÇИНЧЕН

Республикăри нумай колхозсем çĕре вăхăтра тата пахалăхлă сухаласа, кĕрхи тырăсене агротехника кăтартса панă чи лайăх вăхăтра акса хăварса, вăйлă тырпул туса илессĕ. Çав колхозсем кăçал та çĕртме сухине вăхăтра турĕç, выранти удобренисем тăкса çĕре çĕнетрĕç, çĕртме пуссине лайăх пăхса усрассине организацилерĕç, кĕрхи тырăсене акас тĕлĕшпе тĕрлĕ мероприятисем туса ирттерессĕ. Çакăнпа пĕрлех республикăри уйрăм районсенче кĕракине ирттерме тивĕçлипе хатĕрленмессĕ. Кувакино районĕнче çĕртме тумалли плана 25,5 процент, Пăрачкав районĕнче—48,7 процент, Улатăр районĕнче—56,8 процент çеç тултарнă. Çавăн пекех çĕртме тумалли плана Комсомольски, Первомайски, Чкаловски, Шăмăршă тата Çĕмĕрле районĕсенче те тултарман.

Республикăри чылай колхозсемпе районсенче кăçал куракăсем çулса илнĕ хыççăн çĕре сухаласа пĕтермен, акас умĕн çĕртме пуссине кăпкалатассине тивĕçлипе организацилемен, çакă ĕнтĕ кĕрхи тырăсен тухăçлăхне чакарма пултарать.

МТС-семпе совхоз директорĕсем, колхоз председателĕсем сеялкăсене кĕраки валли хатĕрлес ĕç çине тивĕçлипе саварăнса пăхмаççĕ.

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ çапла йышăннă.

1. Кăçалхи кĕракине колхозсемпе совхозсенче августăн 10-мĕшĕпе 25-мĕшĕ хушшинче ирттермелле. Кĕрхи тулăна тата вăрлăх участокĕсене малтанхи пилĕк кун хушшинче акса пĕтермелле.

2. Колхозсенче сеялка пур çĕртех кĕрхи тырăсене алăпа акассине сиенлĕ ĕç тесе шутламалла. МТС-семпе совхоз директорĕсене, колхоз председателĕсене, райисполкомсемпе ВКП(б) райкомĕсене кĕраки пуçланиччен тракторпа тата лашапа ĕçлемелли пур сеялкăсене те юсама хушнă. Вĕсемпе туллин усă курса кĕрхи тырăсене пĕтĕмпех ретĕн акса хăвармалла.

3. Кувакино, Пăрачкав, Улатăр, Комсомольски, Первомайски, Шăмăршă тата Çĕмĕрле райисполкомĕсемпе ВКП(б) райкомĕсене çак çывăх кунсенчех çĕртме сухине пĕтерес тĕлĕшпе тивĕçлĕ мерăсем йышăнма хушнă. Çак ĕçе ăнăçлăн тăвас тесе, МТС-семпе совхозсен пур тракторĕсемпе те тата колхозсемпе совхозсен пур ĕç лашисемпе те усă курмалла.

4. МТС-семпе совхоз директорĕсене, колхоз председателĕсене, райçĕрĕç пайĕсене кăçал кĕрхи тырăсем акмалли çĕр лаптăкĕ çинчи тырпула пухса кĕрсе, çав çĕре августăн 10-мĕшĕнчен кая юлмасăр тислĕк е урăх тĕрлĕ удобрени тăкса сухаласа пăрахма хушнă.

5. Çĕртме пуссине иккĕмĕш хут акас умĕн çеç сухаланине тĕрĕс мар тата агротехника енчен сиенлĕ тесе шутласа, çĕртме пуссине иккĕмĕш хут сухалассине çакăн пек кая хăварни тырпул пухас ĕçрен тата ялхуçалăх продукчĕсене государствăна пама турттарас ĕçрен нумай ĕç лашисем илнине, тин çеç сухаланă çĕр çине акнă пирки кĕрхи тырăсен чылай пысăк пайĕ пĕтме пултарнине палăртнă. Райисполкомсемпе ВКП(б) райкомĕсене августăн 10-мĕшĕнчен кая юлмасăр çĕртме пуссине иккĕмĕш хут сухаласа пĕтермелле тума хушнă. Кĕрхи тырăсене акас умĕн, çĕр хытса кайнине тата çум курăкĕ мĕн чухлĕ пуррине кура, çĕртме пуссине культивацилесе е сӳресе тухмалла.

6. Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссариатне тата выранти çĕрĕç органĕсене кĕрхи тырăсен вăрлăх участокĕсене тĕрлĕ удобренисем тăкса çĕнетнĕ тата лайăх сухаласа кăпкалатнă таса çĕртме пуссинчи чи лайăх çĕр участокĕсене уйăрса пама хушнă. Вăрлăх участокĕсене ир тата сортласа тасатнă вăрлăх акмалла. Госсортфондран илнĕ сортлă вăрлăха пĕтĕмпех акса хăвармалла.

7. Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссариатне, райисполкомсемпе ВКП(б) райкомĕсене кĕраки валли вăхăтра вăрлăх хатĕрлеме, вăрлăх участокĕсенчи тырпула пухса кĕрсе çапма тата чĕрĕ вăрлăха малтанлăха типĕтмелле тума хушнă. Сортлă вăрлăха Госсортфонда вăхăтра памалла тăвас тесе тата вăрлăх участокĕсем çине акса хăвармашкăн колхозсемпе совхозсене Госсортфондран вăрлăх памалла тăвас тесе, райсемхозсемпе селекци станцийĕсенчи кĕрхи тырăсене вăхăтра пухса кĕртесси çине уйрăмах тимлĕн пăхмалла.

8. Республикăри тата районсенчи хаçат редакторĕсене кĕракине хатĕрленес тата ирттерес ĕç мĕнле пынине, кĕрхи тырăсене туса илес тĕлĕшпе малта пыракан колхозсен опытне, пысăк тухăçлăхпа ĕçлекен колхозниксене тата уйрăм районсемпе колхозсенчи çитменлĕхсене кăтартса пама хушас.

Ăмăртура мала тухассишĕн

КУСЛАВККА, августăн 2-мĕшĕ. (Телефонпа). Ĕнер пирĕн трактористсемпе комбайнерсем тата МТС-ри ытти работниксем Саратов облаçĕнчи Надеждински МТС коллективĕ Çĕнтерӳ ячĕпе социализмлă ăмăрту пуçарса яма чĕнсе çырнине сӳтсе-яврĕç. Ăмăртăва хутшăнса, эпир çакăн пек обязательствăсем илтĕмĕр.

Тырпул пухса кĕртес ĕçре кашни тракторпа молотилкăна пĕр чарăнмасăр ĕçлеттермелле, «Коммунар» маркăллă кашни комбайнпа 200 гектартан кая мар вырса пухмалла. МТС тракторĕсемпе комбайнĕсем ĕçлекен колхозсенче тырпул пухса кĕртес ĕçе 17 ĕç кунĕнче пĕтĕмпех вĕçлемелле. Кашни комбайн çумĕнче зерноуловительсем пулмалла, тырпула пĕр тăкаксăр пухса кĕртмелле.

МТС ĕçлекен колхозсенче кĕрхи тырă акассине 12 кун хушшинче вĕçлемелле тата çак ĕçе пĕтĕмпех лайăх пахалăхпа тумалла. Кĕрхи çĕртме тăвассине октябрĕн 15-мĕшĕ тĕлне вĕçлемелле.

Пирĕн трактористсемпе комбайнерсем плана кăçал 150 процентран кая мар тултарма обязательство илчĕç. Кашни 15 лаша вăйлĕ тракторпа 400 гектар сухаламалла тата горючи 10 процентран кая мар перекетлесе хăвармалла.

Паллах, çак обязательствăсене пурнăçлама çăмăл мар, анчах та эпир вĕсене пурнăçлама пултаратпăр тата пурнăçламалла та. Паянхи куна пирĕн МТС çулталăкри плана тултарчĕ. Комбайнсене йăлтах юсаса пĕтерсе ĕçлемелли вырăна çитернĕ, 12 молотилкăран 11-шне юсанă, юлашкине паян-ыран юсаса пĕтеретпĕр.

Надеждински МТС коллективĕ чĕнсе каланине пирĕн коллектив ырласа кĕтсе илчĕ, халĕ ăмăртура мала тухассишĕн кĕрешме тытăнчĕ.

А. ЛАВРЕНТЬЕВ.
МТС директорĕ.

Ответлă ĕçе пуçăнма хатĕр

ÇĔРПӲ, августăн 2-мĕшĕ. (Телефонпа). «Ĕмĕт» колхоз тырпул пухса кĕме хатĕрленсе çитнĕ. Тырпул пухса кĕртме план туса, ăна пухура çирĕплетнĕ тата Воронеж облаçĕнчи Добринка районĕнчи Ленин орденлĕ Ильич ячĕпе тăракан колхоз колхозникĕсем социализмлă ăмăрту пуçарса яма чĕнсе çырнине сӳтсе-явнă.

Çĕнтерӳ ячĕпе пыракан ăмăртăва хутшăнса, колхозниксемпе колхозницăсем ырăша 8 ĕç кунĕнче пухса кĕртме йышăннă. Тырă вырма пуçланă хыççăн 5-мĕш кун авăн çапса государствăна тырă леçме тытăнаççĕ. Ку тĕлĕшпе ятарласа транспорт бригади тунă. Тырă леçме пурĕ 300 шăналăк тата 150 михĕ хатĕрленĕ, урапасем хатĕр, тикĕт, маç çителĕклĕ. Колхозăн 8 амбар пур, вĕсене пĕтĕмпех юсаса дезинфекциленĕ.

Тырă вырма тухсанах колхозра столовăй тата ача ясли ĕçлеме тытăнать.

— Пирĕн колхозăн 4 жнейка пур, вĕсем пурте юсавлă, унсăр пуçне ырăша 100 çынна яхăн çурлапа выраççĕ. 4 молотилкăна авăн çапма юсаса лартнă. Вăйлă тырпула вăхăтра тата пĕр тăккаламасăр пухса кĕртес ответлă ĕçе кĕçех пуçăнатпăр,—тет колхоз председателĕ Е. Тихонов юлташ.

П. ПАВЛОВ.

ЖЕЛЕЗНОДОРОЖНИКСЕН КУНĔ УМĔН

КАНАШ, августăн 2-мĕшĕ. (Телефонпа). Вагонсем юсакан завод коллективĕ железнодорожниксен Пĕтĕм Союзри кунне ĕçре çитĕнӳсем тунипе кĕтсе илет. Çĕнтерӳ ячĕпе пыракан социализмлă ăмăртура тимлĕн ĕçлесе, чылай цехсем хăйсен производство планĕсене срокчен тултарчĕç. Çак уйăхри плана рессорсем тăвакан цех 22 кун хушшинче, йывăç каскалакан цех 27 кунра, механически цех 28 кунра тултарчĕç. Вагонсем юсакан цех та вагонсем юсамалли задание срокчен пурнăçа кĕртрĕ.

Железнодорожниксен кунне тивĕçлипе кĕтсе илессишĕн кĕрешсе, заводри бригадăсемпе стахановецсем хăйсен ĕç тухăçлăхне татах та ӳстерчĕç. Вагонсем юсакан цехри Хĕрлĕ Ялавлă бригада (бригадирĕ Смоляков юлташ) уйăхри задание срокран эрне малтан пурнăçа кĕртрĕ. Бригада заданирен ирттерсе татах та 6 вагон юсаса кăларма сăмах панă. Халĕ бригада сăмаха пурнăça кĕртсе пырать.

Механически цехри стахановец комсомолец Матанин çак уйăхра кашни кун 5-шер норма тултарса ĕçлет. Йывăç каскалакан цехри Гринь тата Степанов столярсем нормăна 3,5 хут тултараççĕ. Вагонсем тăвакан цехри Журба, Голубев тата Кузьмин слесарьсем те нормăран темиçе хут тухăçлă ĕçлеççĕ.

Завод коллективĕ ВЦСПС-па Çулçӳрен Халăх Комиссариачĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне ĕнтĕ тăваттăмĕш уйăх тытать. Коллектив çав ялава малашне те тытса тăрассишĕн тата Оборонăн Государственный Комитечĕн Ялавне илме тивĕçлĕ пулассишĕн кĕрешет.

М. ДМИТРИЕВ,
ВКП(б) Центральный Комитечĕн заводри парторгĕ.

Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕнче

Колхозсенче обществăллă выльăх-чĕрлĕх тата лашасем ĕрчетес енĕпе районсем хушшинче пыракан социализмлă ăмăртăвăн 1945 çулхи 6 уйăх хушшинчи итогĕсем çинчен

Колхозсенче обществăллă выльăх-чĕрлĕх тата лашасем ĕрчетес енĕпе районсем хушшинче пыракан социализмлă ăмăртăвăн 1945 çулхи 6 уйăх хушшинчи итогĕсене пăхса тухса, Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ çапла йышăннă:

1. Колхозсенче обществăллă выльăх-чĕрлĕх тата лашасем ĕрчетес енĕпе районсем хушшинче пыракан социализмлă ăмăртура 1945 çулхи 6 уйăх хушшинчи итогсем тăрăх Красноармейски район мала тухнă тесе йышăнас, государствăна выльăх-чĕрлĕх продукцийĕ памалли обязательствăсене пурнăça кĕртес тĕлĕшпе вăл чи лайăх тĕслĕхсем кăтартнине палăртас. Красноармейски района, Сĕнтĕрвăрри районĕнчен илсе, Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне парас.

Ĕçре уйрăмах палăрнă зоотехниксене, ветврачсене тата выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçри ытти специалистсене премилемĕ Красноармейски райисполкомне 5 пин тенкĕ укçа парас.

2. 1945 çулхи 6 уйăх хушшинче выльăх-чĕрлĕх тата лашасем ĕрчетес енĕпе Оборонăн Государственный Комитечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне илнĕ Шăхасан районĕ, Вăрмар, Çĕрпӳ, Октябрьски, Советски тата Сĕнтĕр районĕсем лайăх ĕçленине палăртас.

Чăваш АССР Совнаркомĕнче

Тырпул сутма чарасси çинчен

Чăваш АССР Совнаркомĕ çак кунсенче йышăннă постановлени тăрăх, колхозсене, колхозниксене тата пĕччен хуçалăхпа пурăнакан хресченсене вĕсем государство умĕнчи хăйсен обязательствисене парса татиччен тĕштырă, çăнăх, пĕçернĕ çăкăр сутма тата улăштарма чарнă. Колхозсем, колхозниксем тата пĕччен хуçалăхпа пурăнакан хресченсем государствăна тĕштырă пĕтĕм республикипе парса татсан (кивсен илнĕ тырра, обязательнăй поставкăна, Хĕрлĕ Çар фондне памалли тырра, МТС ĕçленĕшĕн тӳлемелли натуроплатăна парса татсан тата çавăн пекех колхозсенчи вăрлăхпа фураж фончĕсене хывса çитерсен) СССР Совнаркомĕ ирĕк панă хыççăн кăна тырă сутма пултараççĕ.

Колхоз председателĕсемпе ытти ĕçлĕ çынсене, çак постановление пăссан, суд урлă ответ тыттармалла тунă.

Колхозниксене, пĕччен хуçалăхпа пурăнакан хресченсене, тырă е çăкăр законсăр сутса айăпа кĕрекенсене, малтанхи хут 300 тенкĕ çити штраф тăваççĕ, иккĕмĕш хут айăпа кĕрсен суда параççĕ. Законсăр сутакан тырпула туртса илмелле те хатĕрлев органĕсене памалла.

СССР Хатĕрлев Халăх Комиссариачĕн Чăваш республикинчи уполномоченнăйне Федотов юлташа, ĕççынни депутачĕсен райсовечĕсен исполкомĕсене çак постановлени мĕнле пурнăçа кĕрсе пынине асăрхаса тăма хушнă. Пасарсене контроллесе тăрас ĕçе милици органĕсем çине хунă.

Горбатов генерал-полковник Берлинри пресс-конференцире тухса калани

БЕРЛИН, июлĕн 31-мĕшĕ. (ТАСС). Июлĕн 30-мĕшĕнче Берлин хулинчи совет коменданчĕ Горбатов генерал-полковник ют çĕршыв корреспонденчĕсем умĕнче сăмах тухса каланă.

Хăйĕн сăмахĕнче Горбатов юлташ малтанах Берлина илессишĕн пулнă çапăçусем çинчен кĕскен каласа панă. «Берлин хулине,—тенĕ вăл,—союзниксен авиацийĕ нумай вăхăт хушши пĕр чарăнмасăр бомбăсем пăрахса аркатнă хыççăн тата Хĕрлĕ Çарăн паттăр чаçĕсем 10 кун хушши штурмланă хыççăн йышăнса илнĕ. Бомбăсем вăйлăн пăрахни тата пехота штурмлани хулара нумай çуллăха йĕрсем хăварнă. Хулашăн пынă вăйлă çапăçу паллисем кашни кварталтах, кашни çурт çинчех курăнаççĕ. Виçĕ уйăх каярах Берлин урамĕсем тăрăх утса тухма питĕ йывăрччĕ, лашапа е машинăпа çӳреме май та çукчĕ. Хула шывсăр, çутăсăр тата апат-çимĕçсĕр тăрса юлнă.

Совет Союзĕн çар командованийĕ умне хулара йĕркеллĕ пурнăç тăвас тĕлĕшпе пысăк задачăсем тухса тăчĕç. Чи малтан Берлин хулинче юлнă 3 миллион çурă çынна апат-çимĕç парса тăрас ĕçе организацилемелле пулнă. Гитлерла пуçлăхсем хулара апат-çимĕç запасĕ пĕрре те хăварман. Хĕрлĕ Çар чаçĕсем Берлина иличчен хулара апат-çимĕç ытăвĕ питĕ çивĕчленсе кайнă. Вырăнти халăх хушшинче тĕрлĕ чир-чĕрсем саралма пуçланă. Чир-чĕрсем пуринчен ытла ют çĕршыв рабочийĕсем хушшинче саралнă, ун пек рабочисем Берлинра темиçе çĕр пин çын пулнă.

Хулара нимĕнле граждански администраци те юлман. Çавăнпа та нумай енлĕ пур ыйтусене те совет çар комендатурисен татса памалла пулнă. Çакăнпа пĕрлех хулара вырăнти самоуправлени органĕсене—магистратсене, полицие, суд органĕсене тата ытти учрежденисене те туса хума тытăннă. Самоуправлени органĕсенче ĕçлеме фашизма хирĕç активлăн кĕрешекен çынсем пынă, вĕсем хулана юсас ĕçе хутшăннă. Хула халăхне снабжени парса тăрас ĕçе йĕркелеме Совет Союзĕн интендант работникĕсене тата тивĕçлĕ транспорт уйăрнă. Çавна пула халăха апат-çимĕç парса тăрас ĕçе йĕркелесе çитернĕ. Берлинра пурăнакан çынсене норма тăрăх апат-çимĕç парса тăма пуçланă.

Хулана хăвăрт йĕркене кĕртсе пынă. Урамсене чулсемпе ăпăр-тапăртан тасатма кашни кунах вуншар пин çын тухать. Трамвай линийĕсемпе метро çулĕсене юсаççĕ. Электричество пама тытăннă, шыв пăрăхĕпе канализаци тата коммунальнăй ытти предприятисем те ĕçлеме пуçланă. Берлинри электростанцисене нумайĕшне бомбăсем пăрахнă чухне стройран кăларнă. Электричество пралукĕсене пĕтĕмпех татса пĕтернĕ. Берлинра халĕ 7 электростанци ĕçлет, вĕсем шыв пăрăхĕсене, метрона, трамвай паркне, пурăнмалли çуртсене тата нумай предприятисене çителĕклĕ таран электричество парса тăраççĕ. Кашни талăкра халĕ 150—160 пин киловатт электричество энергийĕ тухать. Çапăçусем пĕтнĕ хыççăн виçĕ эрне те иртмен, уйрăм магистральсенче трамвай, каярахпа метро поезчĕсем çӳреме пуçланă. Хальхи вăхăтра 25 трамвай линийĕ ĕçлет, вĕсем тăрăх 1.012 вагон çӳрет. 1938 çулхипе танлаштарсан, вăл 40 процент чухлĕ шутланать. 1938 çулта Берлинри метрон тăршшĕ 75 километр пулнă. Хальхи вăхăтра 56,6 километр юсаса ĕçе янă. Кашни талăк хушшинчех метро поезчĕсем çур миллион ытла пассажир турттараççĕ. Метрона ĕçлеттерме 98 миллион кубометр шыв кăлармалла, метро çулĕн тулашĕнчи çуртйĕрĕссемпе станцийĕсене юсас тĕлĕшпе пысăк ĕçсем туса ирттермелле пулнă. Метрона трамвайсăр пуçне хулара омнибуссем пур, талăкра вĕсем 90.000 пассажира çити турттараççĕ.

Июлĕн 1-мĕшĕ тĕлне Берлинра 700 яхăн тĕрлĕ предприятисем ĕçе янă, вĕсем куллен кирлĕ таварсем туса кăлараççĕ. Хулара 11 пине яхăн тĕрлĕ магазинсем, 8.000 ытла çĕвĕ мастерскойĕсем тата 4.000 ытла ытти тĕрлĕ мастерскойсем уçнă. Промышленноçпа суту-илӳ предприятийĕсене те банкра кивçен укçа параççĕ. Промышленноçпа тата коммунальнăй предприятисемпе пĕрлех тĕрлĕ культурăллă учрежденисем те ĕçлеме тытăннă.

Хулара 162 кинотеатр, 95 театрпа кабаре, 528 шкул тата 150 библиотека уçнă.

Июлĕн 15-мĕшĕнчен пуçласа союзниксен комендатури ĕçлет. Американецсемпе акăлчансем халăха апат-çимĕçпе топливо парса тăрас, коммунальнăй хуçалăха йĕркелес тĕлĕшпе пирĕнпе пĕр пекех тăрăшса ĕçлеççĕ. Манăн Берлин хулин главнăй коменданчĕ пулса ĕçлемелле пулчĕ. Августăн 1-мĕшĕнчен пуçласа вăл ĕçе Паркс генерал-майор тытăнать, каярахпа, августăн 16-мĕшĕнчен пуçласа,—Лайн генерал тытăнать».

— Берлинра эпир пĕрле ĕçлени,—тенĕ юлашкинчен Горбатов генерал-полковник,—пирĕн туслă çыхăнупа пĕрне-пĕри хисепленин тĕслĕхĕ пулса тăни пирки иккĕленмелли çук. Паркс тата Лайн генералсене эпир вĕсем ку таранччен паттăр çар начальникĕсем пулнине пĕлнĕ. Берлинра эпир вĕсем чаплă администраторсемпе организаторсем пулнине куртăмăр. Берлина тытса тăрас тĕлĕшпе пĕрле ĕçленин малтанхи кунĕсем эпир çапăçу хирĕнче кăна мар, аркатса тăкнă хулара йĕрке тăвас тĕлĕшпе те ăнăçлăн ĕçлеме пултарнине кăтартса пачĕç.

Хăй тухса каланă тăрăх Горбатов генерал ют çĕршыв корреспонденчĕсем панă ыйтусем çине ответленĕ.

ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Чăваш АССР искусствисен тава тивĕçлĕ деятелĕн хисеплĕ ятне парасси çинчен

Чăваш совет искусствине аталантарас ĕçре тунă çитĕнӳсемшĕн Чăваш АССР искусствисен тава тивĕçлĕ деятелĕн хисеплĕ ятне çаксене парас:

1. Александр Димитриевич Кăлкана—драматурга, Чăваш АССР Совнаркомĕ çумĕнчи Искусство ĕçĕсен Управленийĕн начальникне.

2. Филипп Миронович Лукина — композитора, Чăвашсен юрăпа ташă ансамблĕн художествăллă руководительне.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ **З. АНДРЕЕВА.**

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ **А. ИЗМАЙЛОВ.**

Шупашкар хули. 1945 çулхи августăн 2-мĕшĕ.

Муркаш районне Хĕрлĕ Ялав пани

МУРКАШ, августăн 2-мĕшĕ. (Телефонпа). Июлĕн 31-мĕшĕнче кунта районри финанс работникĕсен канашлăвĕ пулса иртрĕ. Канашлура района Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне пачĕç.

— Муркаш районĕ,—тет Совнарком представителĕ Ланское юлташ,—II-мĕш кварталта укçа-тенкĕ пухмалли плана 135 процент тултарчĕ. Çавăнпа вăл Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне илме тивĕçлĕ пулчĕ.

Ялава районри финанс пайĕн заведующийĕ Абрамов юлташ илет.

— Района ялав пани,— тет Абрамов юлташ,—финанс работникĕсен ĕçне пысăка хурса хаклани пулать. Çак хисеп пире малашне татах та лайăхрах ĕçлеме хушать.

Канашлура пулнисем, Хĕрлĕ Ялав илни çине ответлесе, III-мĕш кварталта укçа-тенкĕ пухмалли плана сентябрĕн 15-мĕшĕ тĕлне тултарма, хăшпĕр ял Совечĕсем çак ĕçре юлса пынине пĕтерме пулчĕç.

Ф. МАЛЫШКИН.

ĂМĂРТУРА ТУНĂ ĔÇСЕМ

Çĕнтерӳ ячĕпе пыракан социализмлă ăмăртура тимлĕн ĕçлесе, Шупашкарти макарон фабрики июль уйăхĕнчи производство планне ăнăçлăн тултарнă. Социализмлă ăмăртура фабрикăри чылай работницăсем хăйсен ĕç тухăçлăхне ӳстернĕ. Чуста çăракан Тарасова иртнĕ уйăхри нормăна 1,5 хут ирттерсе тултарнă. Маловăпа Николаткина работницăсем те нормăран чылай тухăçлăрах ĕçленĕ. Кочегар Борисова уйăх хушшинче 30 кубометр вутă перекетлесе хăварнă.

Çĕнтерӳçĕ-воинсене—пулăшу

СОВЕТСКОЕ. «Ватăрах çынсене Çапăçури Çартан киле ярасси çинчен йышăннă закона» пурнăçласа, Чемейри «Сеятель» колхоз членĕсем киле таврăнакан çĕнтерӳçĕ-воинсене кĕтсе илес тĕлĕшпе пысăк ĕçсем турĕç. Колхозниксем урамсемпе килхушшисене шăлса тасатрĕç, обществăллă çуртсене илемлетсе капăрлатрĕç. Колхоз пĕр воин çемьине ĕне илсе панă. Çартан таврăнакан çынсем валли апат-çимĕç хатĕрленĕ, ĕçе вырнаçтарма палăртса хунă. Поезд çинчен ансан, киле хăвăртрах çитерме чи лайăх лашасем уйăрса хунă.

(Хамăр корр.).

ВЛКСМ Обкомĕн XII-мĕш пленумĕ

Июлĕн 30—31-мĕшĕсенче Шупашкарта ВЛКСМ Чăваш Обкомĕн XII-мĕш пленумĕ пулса иртнĕ. Пленум икĕ ыйту—ВЛКСМ Центральный Комитечĕн XIII-мĕш пленумĕн решенийĕсене мĕнле пурнăçласа пынин çинчен тата комсомол организацийĕсем çĕнĕ вĕренӳ çулне хатĕрленес ĕçе мĕнле хутшăннин çинчен—сӳтсе-яврĕ.

Малтанхи ыйтупа комсомол Чăваш Обкомĕн секретарĕ Л. Михайлов юлташ доклад туса пачĕ.

— ВЛКСМ Центральный Комитечĕн XIII-мĕш пленумĕн решенийĕсем,—тет Михайлов юлташ,—комсомол организацийĕсен ĕçне тĕпренех çĕнетсе лайăхлатма пулăшрĕç. Кăçал комсомолăн районсенчи, хуласенчи организацийĕсенче отчетпа суйлав конференцийĕсене ирттернĕ. Комсомолецсен политикăллă пĕлĕвне ӳстерес майпа, комсомолăн пуçламĕш организацийĕсем çумĕнче 73 политшкул тата 173 политкружок организациленĕ. Унсăр пуçне, Шупашкар, Канаш, Улатăр, Етĕрне хулисенче тата Куславккара комсомол активĕн шкулĕсем ĕçлеççĕ. Вăл шкулсенче 134 çын вĕренет. Май уйăхĕнче партин пуçламĕш организацийĕсем çумĕнчи политшкулсенчен 1570 комсомолец вĕренсе тухнă. Колхозсенчи пуçламĕш организацин секретарĕсемпе вунăкунлăх семинарсем ирттернĕ. Вăл семинарсенче 806 секретарь пулнă. Анчах та хăшпĕр районсенче комсомолецсен политикăллă пĕлĕвне ӳстерес тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçлеççĕ. Сĕнтĕрвăрри, Пăрачкав, Калинино, Элĕк тата Елчĕк районĕсенче политшкулсемпе кружоксен занятийĕсем йĕркеллĕ пулмаççĕ. Лекцисемпе докладсен пахалăхĕ начар, нумай комсомолецсем хăйсем тĕллĕн вĕренмеççĕ.

ВЛКСМ Центральный Комитечĕн XIII-мĕш пленумĕн решенийĕсене хуласенчи, районсенчи интеллигенци пухăвĕсенче сӳтсе-явнă. Çавăн хыççăн нумай районсенче, хуласенче учительсемпе врачсем, инженерсем, ялхуçалăх специалисчĕсем комсомолецсемпе çамрăксене интереслентерекен темăсемпе лекцисемпе докладсем туса панă.

Анчах хăшпĕр районсенче интеллигенцие комсомол ĕçне çителĕксĕр хутшăнтараççĕ. Сĕнтĕрвăрри районĕнче комсомолецсен пухăвĕнче икĕ лекци кăна туса панă. Савнашкалах Çĕмĕрле, Улатăр, Элĕк, Хĕрлĕ Чутай, Етĕрне районĕсенче те ку тĕлĕшпе начар ĕçлеççĕ.

ВЛКСМ Центральный Комитечĕн XIII-мĕш пленумĕ ремесла тата чугун çул училищисемпе ФЗО шкулĕсенчи комсомол организацийĕсен ĕçне лайăхлатма хушса хăварчĕ. Апла пулин те Улатăрти чугун çул училищинчи комсомолецсем хăйсен ĕçне чылай япăхлатнă. Унта пухусемпе кружок занятийĕсене йĕркеллĕ ирттермеççĕ. Училищăре вĕренекенсем хушшинче политикăллă воспитани ĕçĕ начар.

ВЛКСМ Центральный Комитечĕн XIII-мĕш пленумĕн решенийĕсене пурнăçласа, пирĕн республикăри комсомолецсем 216 вулав çуртне юсаса йĕркеленĕ. Комсомолецсем пуçарнипе художествăллă пултарулăх кружокĕсем хăйсен ĕçне лайăхлатрĕç. Çавăн пекех физкультурăна спорт тата вăрçă ĕçне вĕренесси те нумай лайăхланнă.

Малалла докладчик комсомолăн чăваш организацийĕ хăвăрт ӳссе пыни çинчен калать. 1941 çулхи июлĕн 1-мĕшĕ тĕлне республикăра 35341 комсомолец пулнă, вĕсенчен 34646 çын фронта тухса кайнă. 1945 çулхи июлĕн 1-мĕшĕ тĕлне 44912 çамрăка комсомола илнĕ. 4.010 комсомолец большевиксен парти ретне кĕме тивĕçлĕ пулнă.

Комсомол организацийĕсен ĕçĕнче пысăк çитменлĕхсем те пур-ха. Республикăра сахал йышлă пĕчĕк организацисем 857 шутланаççĕ, 393 колхозра комсомол организацийĕсем çук. Кăçалхи çулăн иккĕмĕш кварталĕнче 1545 организацире пĕр çамрăка та комсомола илмен. ВЛКСМ Муркаш райкомĕнче комсомола илме ыйтса панă 12 заявление 1944 çулхи ноябрь уйăхĕнчен вара тата 36 заявление 1945 çулхи январьпе февраль уйăхĕнчен вара пăхса тухмасăр выртарнă. ВЛКСМ райкомĕнче июлĕн 25-мĕшĕ тĕлне пăхса тухман заявленисем 85 пулнă.

Хăшпĕр районсенче уйрăм организацисем мĕнле ӳснипе пачах интересленмеççĕ. Калинино районĕнчи «Броневик» колхозра 1943 çулта 50 комсомолец пулнă пулсан, халĕ 14 комсомолец çеç юлнă. Улатăр районĕнчи «Путь Ильича» колхозра та 50 комсомолецран 14 çеç юлнă. Çав вăхăтрах ку организацисенче колхоз çамрăкĕсене комсомола хутшăнтарас тĕлĕшпе нимĕн те тумаççĕ. Çĕмĕрле тата Етĕрне МТС-ĕсем çумĕнчи комсомол организацийĕсем малта пыракан трактористсемпе комбайнерсене комсомола илес тĕлĕшпе ĕçлемеççĕ.

Шупашкар районĕнче комсомол комитечĕсен секретарĕсенчен 79 çын пĕрремĕш çул ĕçлеççĕ. Вĕсен ĕçлес хавасланăхĕ пысăк. Анчах ВЛКСМ райкомĕ çамрăк секретарьсен политикăллă пĕлĕвне ӳстерес тата вĕсене ĕçлеме вĕрентес тĕлĕшпе нимĕн те тумасть. Çавна пула кунта комсомол пухăвĕсем йĕркеллĕ иртмеççĕ. Вăрмар, Красноармейски, Пăрачкав тата Элĕк районĕсенчи хăшпĕр организацисенче пухусене комсомола илес ыйтупа çеç ирттереççĕ. Пухусенче комсомолецсемпе çамрăксене интереслентерекен ыйтусене сӳтсе-явни çук. Нумай чухне пухусемпе пленумсене самокритикăсăр ирттереççĕ, çитменлĕхсене тишкĕрмеççĕ.

Комсомол хуçалăхĕнче большевикла йĕрке пулни, учет ĕçне кирлĕ пек туса пыни комсомолецсен ĕçлес хаваслăхне çĕклет, дисциплинăна çирĕплетет. Хăшпĕр районсенче çак ĕç çине çиелтен пăхаççĕ. Çĕнĕрен илнĕ комсомолецсене комсомол билечĕсем вăхăтра памаççĕ. Хĕрлĕ Чутай районĕнче 1942 çулта комсомола кĕнĕ 7 çынна, 1943 çулта илнĕ 35 комсомолеца халĕ те комсомол билечĕсем паман.

Комсомол работникĕсен пуçламĕш организацисемпе çирĕп çыхăнса ĕçлемелле. Йышăннă решенисене пурнăçлассишĕн кĕрешмелле. Анчах ВЛКСМ Сĕнтĕрвăрри райкомĕнче ĕçлекенсем çакна пачах асра тытмаççĕ. Вĕсем бюрора ыйтусем лартса сӳтсе-яваççĕ те мĕн йышăннине хыççăнах манса каяççĕ. Çакна пула районра 74 колхозран 51 колхозра комсомол организацийĕ çук. Чкаловски тата Комсомольски районсенче пĕрер колхозра кăна комсомол организацийĕсем çук. Ку районсенчи комсомол работникĕсем колхоз çамрăкĕсем хушшинче ытларах пулаççĕ, вĕсемпе çыхăнса ĕçлеççĕ. Çакă вăл ВЛКСМ Чкаловски тата Комсомольски райкомĕсенче ĕçлекенсем дисциплинăллă пулни, ĕçе юратни çинчен калать.

Халĕ колхозсенче обществăллă вылăх-чĕрлĕх валли апат хатĕрлес тата тырпула уйран пухса кĕртме хатĕрленес енĕпе хĕрӳллĕ ĕçсем пыраççĕ. Дисциплинăллă та ĕçе юратакан комсомолецсем çак ĕçре те колхозсемпе МТС-сене нумай пулăшма пултараççĕ.

Докладчик тырпула уйран пухса кĕртес тата государствăна тырпул парас ĕçри задачăсем çинчен тĕплĕн чарăнса тăчĕ. Çак ответлă тапхăрта комсомолецсем ялти çамрăксен вожакĕсем пулма тивĕç. Комсомол организацийĕсемпе çамрăксем СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ 1945 çулта тырпул пухса кĕртесси тата ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлесси çинчен кăларнă постановление пурнăçа кĕртнĕ çĕре активлăн хутшăнса ĕçлемелле.

Михайлов юлташ доклачĕ тăрăх прение 15 çын тухса калаçрĕç.

Комсомол организацийĕсем вĕренӳ çулне хатĕрленес ĕçсене мĕнле хутшăнни çинчен ВЛКСМ Обкомĕн шкулсем енĕпе ĕçлекен секретарĕ Токарев юлташ доклад туса пачĕ. Докладчик çĕнĕ вĕренӳ çулне хатĕрленес тĕлĕшпе комсомол организацийĕсем умĕнче тăракан задачăсем çинчен каларĕ. Хăшпĕр районсенче шкул çулне çитнĕ ачасене пурне те шкула явăçтарман, вĕренме пăрахнисем те сахал мар пулнă. Çапла вара Пăрачкав, Канаш, Улатăр, Йĕпреç тата Куславкка районĕсенче пурне те хут вĕрентмелли закона пурнăçа кĕртмен. Хăшпĕр шкулсенче вутă çитменнисем пулнă. Çак çитменлĕхсем кăçал та палăраççĕ. Нумай районсенче вутă касса хатĕрлемелли тата турттармалли плана тултарман. Çак ĕç Куславкка, Кувакино, Улатăр, Первомайски, Хĕрлĕ Чутай, Çĕрпӳ, Çĕмĕрле районĕсенче начар пырать.

Чурачăк, Шăхасан, тата Етĕрне районĕсенче хăшпĕр шкулсен çурчĕсем юхăнса кайнă, вĕсенче таса мар, чӳречисемпе алăкĕсене çĕмĕрсе пĕтернĕ. Çакна комсомолецсем кураççĕ, анчах нимĕн те тумаççĕ.

Малалла докладчик чи лайăх комсомолецсемпе çамрăксене педагогика училищисене вĕренме ярасси çинчен калать. Ку тĕлĕшпе Калинино районĕнче начар мар ĕçленĕ. Шкулсенчен вĕренсе тухакансемпе ятарласа пухусем ирттернĕ, çапла вара ку районра 120 çамрăк педагогика училищисене вĕренме кайма кăмăл тунă. Анчах хăшпĕр районсенче ку тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçлеççĕ. Çавна пула ĕнтĕ республикăри педагогика училищисене кăçал 810 çамрăк илмелле пулсан, паянхи куна 407 заявлени кăна панă. Уйрăмăнах ку ĕç Етĕрне районĕнче начар пырать. Кунта педагогика училищине 175 çын вĕренме илмелле, июлĕн 30-мĕшĕ тĕлне 36 заявлени кăна панă.

Докладчик çамрăк рабочисен тата ялти çамрăксен каçхи шкулĕсен ĕçĕсене лайăхлатасси çинчен тĕплĕн чарăнса тăчĕ.

Токарев юлташ доклачĕ тăрăх прение 13 çын тухса калаçрĕç. Пленум хупăнас умĕн ВКП(б) Обкомĕн секретарĕ **И. М. Чарыков** юлташ пысăк сăмах тухса каларĕ. Чарыков юлташ, ВЛКСМ Центральный Комитечĕн XIII-мĕш пленумĕн решенийĕсене пурнăçлас ĕçре пысăк çитменлĕхсем пуррине палăртса, комсомол организацийĕсем умне чылай практикăллă задачăсем лартрĕ. Чарыков юлташ уйрăмăнах тырпула кĕске вăхăтра тата пĕр тăккаламасăр пухса кĕртесси, ăна тирпейлĕ сыхласа усрасси çинчен чарăнса тăчĕ. Комсомолецсем обществăллă вылăх-чĕрлĕхе ĕрчетес тĕлĕшпе тумалли задачăсене палăртнă. Чарыков юлташ комсомолецсемпе çамрăксен политикăллă пĕлĕвне, агротехникăпа зоотехника пĕлĕвне ӳстерес майпа çине тăрса ĕçлеме кирли çинчен каларĕ. Республикăри комсомол организацийĕсемпе çамрăксене 1946 çулта вăйлă тырпул туса илессишĕн кĕрешĕве тухма чĕнчĕ.

УЖГОРОД ХУЛИНЧЕ УНИВЕРСИТЕТ УÇАÇÇĔ

УЖГОРОД, августăн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Карпат леш енчи Украинăри Халăх Совечĕ декрет кăларнă. Декретра Ужгород хулинче государство университечĕ уçасси çинчен каланă. Çĕнĕ вĕренӳ çулĕнче университетăн 1-мĕш курсне 240 студент илмелле. Университетра октябрĕн 1-мĕшĕнче вĕрентме пуçлаççĕ.

Петэна суд туни

ПАРИЖ, июлĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Паян Петэн сучĕн 7-мĕш ларăвĕнче Эдуард Эррио свидетель каласа панине итленĕ. Хăйĕн сăмахĕнче вăл 35 çул хушши Лион хулин мэрĕ пулса ĕçленĕ хыççăн хăма арестлесе çĕршывран кăларса яни çинчен мар, наци интересĕсемпе çыхăнса тăракан ыйтусем çинчен анчах калатăп, тенĕ. Эррио каланă тăрăх, 1940 çулта Франци вăрçмалла пулнă, анчах та çар руководителĕсем «çар ыванна, вăл малалла вăрçма пултараймасть», тесе парăнма сĕннĕ. Эррио каланă тăрăх, Петэн хăйĕн «конституци акчĕ» кăларнипе государство переворочĕ тунă. Свидетель çакна асăрхаттарнă: Петэн нимĕç тумне тăхăнса çапăçнă офицерсене Хисеплĕ Легион орденĕ парса наградăланă. Çакăн хыççăн вара Эррио хăйĕн Хисеплĕ Легион орденне Петэн патне ярса панă. Вăл ордена Эррио вăрçăччен илнĕ пулнă. «Темиçе эрнерен мана арестлерĕç», тенĕ Эррио.

Эрриона ыйтнă хыççăн присяжнăй заседатель Пьер Блок çапла ыйту панă: мĕншĕн перемири тунипе çыхăнса тăракан ыйтусем çинчен калакан свидетельсене çеç ыйтаççĕ-ха? «Перемири хыççăн,—тенĕ Блок,—нумай усал ĕçсем пулса иртрĕç. Эпĕ хам енчен Виши правительстви айăпласа вĕлернисем çинчен калама пултаракан свидетельсене ыйтма сĕнетĕп».

Суд председателĕ Монжибо Блок ыйтнине пурнăça кĕртме пулать. Çавăн хыççăн генеральнăй прокурор Морне çапла каласа панă: хамăн айăплакан сăмахра эпĕ Блок асăннă тактсене пурне те çутатса пама пулатăп тата свидетельсем калама пултарнинчен ытларах калакан документсем те вуласа парăп, тенĕ.

Свидетель Лустано-Лако офицер «пĕтĕм ответлăха старик çине йăвантарассине» хирĕç пулни çинчен каласа панă.

Вăл каланă тăрăх, çарта коммунистсен ячейкисем пулнă. «Эпĕ çавăн пек ĕçпе çырлахма пултарайман,—тет свидетель. —Эпир çавăн пек ячейкăсене пĕтерсе хутăмăр». Юлашкинчен свидетель çапла каланă: «Петэн хăйне арестленĕ хыççăн питĕ пассивлă пулнă пулин те, эпĕ ăна шеллеме ыйтатăп», тенĕ.

Çакăн хыççăн тата темиçе свидетель каласа панине итленĕ. Вĕсем хушшинче Сикорн с...ка та пулнă. Вăл Çурçĕр Африкăра вилнĕ 11 пин çынăн амăшĕ ячĕпе калани çинчен пĕлтернĕ. «Дарлан адмирал,—тенĕ свидетель,—çав çамрăксене союзниксене хирĕç çапăçма приказ панă. Вăл приказ Петэнран тухнă. Пирĕн ачасем пĕтнишĕн Петэн айăплă. Франци çамрăкĕсене Германишĕн вилме приказ панă этем лайăх француз тесе шутланма пултараймасть».

ПАРИЖ, июлĕн 31-мĕшĕ. (ТАСС). Петэн сучĕн 8-мĕш кунĕнче Марсель Поль свидетельтен ыйтнă. Вăл хирĕç тăракан юхăм çынни. Свидетель Виши «правительствин» ирсĕр ĕçĕсем çинчен тĕплĕн каласа кăтартнă. Виши «правительстви» Франци патриочĕсене çав тери хĕснине, асаплантарнине кăтартса панă. Свидетель каланă тăрăх, Петэн лартнă судьясем Петэн хушнипе Франци патриочĕсене нимĕçсене хирĕç тăнăшăн ялан вĕлермелле суд тунă. Гитлеровецсен Бухенвальдри лагерĕнче свидетельпе пĕрле 7 француз генералĕ ларнă. Вĕсенчен виççĕшне Виши «правительстви» кăтартнипе тытса хупнă.

Присяжнăй заседательсенчен пĕри свидетельтен çапла ыйтнă: çав преступленисемшĕн пуриншĕн те свидетель пĕтĕмĕшпех Петэн ответлă тесе шутлать-и?—тенĕ. Свидетель ун пирки нимĕн те иккеленмелли çук тесе ответленĕ. Петэнпа унăн правительстви хăйсем тунă ĕçсемшĕн пĕтĕмĕшпех ответлă, тенĕ.

Иккĕмĕш свидетель, хирĕç тăракан юхăм организаци членĕ, Поль Ариди çапла каланă: хаçатсенче Петэнпа Гитлер сăнĕсене пичетлесе кăларчĕç. Унта Петэн Гитлера алă парать. Çав кунтан пуçласа эпĕ Петэн Францие сутнă çын пулса тăнине пĕлтĕм. Петэн Дарнан полицийĕ тунă преступленисемшĕн те ответлă, Петэн Франци çыннисене «добровольцсен легионне» пухнăшăн, французсене Германие ĕçлеме ямашкăн мобилизациленĕшĕн айăплă. Петэн,—тенĕ юлашкинчен свидетель,—Германие сутăнса тунă мĕнпур ĕçсемшĕн пуриншĕн те айăплă.

Малалла суд свидетеле чĕннĕ Вейган генералтан ыйтма пуçланă. Вейган пур майпа та Петэна тӳрре кăларма хăтланнă. Вейган çапла каланă: эпĕ Петэна пысăка хурса хисеплетĕп,—тенĕ. Петэн Германипе тунă килĕшĕве Вейган тĕрĕс ĕç вырăнне хума, çав килĕшӳпе капитуляци хушшинче уйрăмлăх тупма хăтланнă.

Вейгана çакăн пек ыйту панă: Петэн Франци çарĕсене союзниксене хирĕç вăрçмашкăн хĕçпăшаллантарнă, çав преступлени пирки свидетель мĕнле шухăшлать?—тенĕ. Вейган, ку ыйтăва хирĕç тӳрĕ ответ парассинчен пăрăнса, çапла каланă: ку вăл суд ĕçĕ мар, мĕншĕн тесен суд Петэн Германипе тунă килĕшĕве пăхать,—тенĕ. Вейган çапла каланине илтсен, хирĕç тăракан юхăм организацийĕ янă присяжнăй заседатель Левек хыттăн çапла каланă: «Суд пуринчен малтан Петэн Францие сутнине тĕпчет»,—тенĕ.

ОБЩИНĂСЕН ПАЛАТИН ПРЕДСЕДАТЕЛЬНЕ СУЙЛАНИ

ЛОНДОН, августăн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, августăн 1-мĕшĕнче общинăсен палати хăйĕн председательне суйлама пухăннă. Общинăсен палатин председателĕ пулма унччен палата председателĕ пулнă Браун полковника суйланă.

„Франкопа Фаррель—Перонăн правительствисем уççăнах фашистла правительствăсем пулаççĕ"

АМЕРИКА СЕНАТОРĔСЕМ ИСПАНИПЕ АРГЕНТИНАРИ ЛАРУ-ТĂРУ ÇИНЧЕН

ВАШИНГТОН, июлĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Сенатор-демократ Магнасон (Вашингтон штатĕнчен) тата сенатор-республиканец Болл (Миннесот штатĕнчен) радио тăрăх тухса каласа Пĕрлешӳллĕ Штатсен правительствине Испанипе Аргентинăн фашистла правительствисене дипломати тата экономика тĕлĕшĕпе хĕсме чĕннĕ.

Болл каланă тăрăх, Франко тата Фаррель—Перонăн правительствисем «уççăнах фашистла правительствăсем пулаççĕ». Вĕсем иккĕшĕ те тĕнĕл çĕршывĕсен тусĕсем пулнă. Испани вăрçă вăхăтĕнче Германипе Италие пулăшса тăнă. Болл каланă тăрăх, «Испанипе Аргентина правительствисем вырăнне демократиллĕ правительствăсем туса хумасăр, çак вăрçăра татăклă çĕнтерӳ пулас çук. Испанипе Аргентинăна, Муссолини правительстви вăхăтĕнчи Итали пекех, тĕнĕл çĕршывĕсен хисепне кĕртес пулать. Вĕсем юлашки минутра хăйсен пичĕсене улăштарма хăтланни нимĕне те пĕлтермест».

Магнасон çапла каларĕ: «Франко пĕтĕм вăрçă тăршшĕнче Германие пулăшса пычĕ. Вăл Германи майлă Совет Союзне хирĕç вăрçма «Сенкер дивизи» ячĕ». Магнасон кăтартса панă тăрăх, Франко тата Фаррель—Перон правительствисем хальхи вăхăтра хăйсем фашизмран пăрăннине кăтартасшăн пек тăрăшаççĕ, çапла майпа вĕсем влаçа упраса хăварма шутлаççĕ. США-н государство департаменте Болл Испанипе Аргентина тĕлĕшпе тытса пыракан политикăна улăштарма, вăл çĕршывсене экономика енĕпе хĕсме чĕннĕ.

ИРАНРИ РАДИОПА ПРОПАГАНДА УПРАВЛЕНИЙĔНЧЕН ДЕМОКРАТИЛЛĔ ÇЫНСЕНЕ ХĂВАЛАСА КĂЛАРАÇÇĔ

ТЕГЕРАН, июлĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Иранри пропаганда управленийĕн директорĕ Сефеви, Иранри радио тăрăх «Правда» хаçат статьине панă хыççăн, пропаганда управленийĕпе радиоуправленийĕн аппарачĕсенчен демократиллĕ шухăшлă служащисене пурне те хăваласа кăларать. Çак кунсенче унăн приказĕ тăрăх Иран халăхĕн юмахçине, юмахсене радио тăрăх вуласа паракансене, СССР-па культура çыхăнăвĕ тытакан Иран обществин членне—Собхине ĕçрен кăларнă. Çавăн пекех халăх партийĕн членне Разави доктора та ĕçрен кăларнă. Вăл радио тăрăх «Правда» хаçат статьине тата ытти статьясене те вуласа панă пулнă.

БЕЛЬЗИНРИ КОНЦЕНТРАЦИ ЛАГЕРĔНЧИ ПАЛАЧСЕНЕ СУД УМНЕ ТĂРАТАС УМĔН

ЛОНДОН, июлĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин 21-мĕш армейски группировка штабĕ çумĕнчи спецкорĕ Керр çапла пĕлтерет: гитлеровецсен Бельзенри концентраци лагерĕн комендантчĕ пулса ĕçленĕ Иосиф Крамера, ытти 47 айăпланакан нимĕçпе пĕрле, август уйăхĕнче Люнебург хулинче суд тума пуçлаççĕ. Иосиф Крамера Брюссельрен Германири Целле тĕрмине куçарнă.

Крамера тата унпа пĕрле пулнă айăпланакан ытти çынсене вĕсем 26 пин çынна ялан вĕлернишĕн тата заключеннăйсене тискер тыткаланăшăн айăплаççĕ.

БАВИРИРЕ ГИТЛЕРЛА «ТЕОРЕТИКА» ГАУСГОФЕРА ТЫТСА ХУПНĂ

ЛОНДОН, июлĕн 31-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонри радио пĕлтернĕ тăрăх, Бавирире юлашки кунсенче ухтарусем пулса иртнĕ. Çав ухтарусем вăхăтĕнче Америка çарĕсем эсэсовецсене тата нацистсен пуçлăхĕсене нумай ярса илнĕ. Вĕсен хушшинче фашистсен пурнăç пространстви текен теорин авторĕ Карл Гаусгофер пур.

АВСТРИРЕ ЛАВАЛЕ АРЕСТЛЕНĔ

ЛОНДОН, июлĕн 31-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонри радио пĕлтернĕ тăрăх, Виши «правительствин» премьер-министрĕ пулнă Пьер Лаваль июлĕн 31-мĕшĕнче хăйĕн арăмĕпе пĕрле самолетпа Испанирен Австрири Линц хулине çитнĕ. Америка влаçĕсем Лавале тытса чарнă та, Парижран илнĕ хыпарсем тăрăх, ăна вĕсем Франци çарĕсем оккупацилесе тăракан районна хуралласа илсе кайнă. Лавале Петэна суд туса пĕтериччен Парижа илсе пыма ĕлкĕреççĕ, тесе шутлаççĕ.

ЛОНДОН, июлĕн 31-мĕшĕ. (ТАСС). АФИ агентстви Парижран панă хыпарсем тăрăх, Парижран официальнăй йĕркепе çапла пĕлтернĕ: Америка çар влаçĕсем Австрире Лавале тытса чарнă.

ЛАВАЛЕ ПАРИЖА ИЛСЕ ПЫНĂ

ПАРИЖ, августăн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Франс агентстви çапла пĕлтерет: августăн 1-мĕшĕнче 17 сехет те 50 минутра Лавале Парижа илсе пынă. Ăна аэродромран тӳрех Френэ тĕрмине илсе кайса хупнă.

АМЕРИКĂРИ ПĔРЛЕШӲЛЛĔ ШТАТСЕН ГОСУДАРСТВО ДЕПАРТАМЕНЧĔН ПРЕДСТАВИТЕЛĔ ЛАВАЛЕ ТЫТСА ХУПНИ ПИРКИ КАЛАНИ

ЛОНДОН, августăн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин корреспонденчĕ Вашингтон хулинчен пĕлтернĕ тăрăх, Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен государство департаменчĕн представителĕ Лавале тытса хупни пирки унччен США официальнăй йĕркепе пĕлтерни çинчен астутарнă. Çав пĕлтерӳре оккупантсемпе килĕшсе ĕçленĕ çынсене, вĕсем кирек хăш çĕршывран пулсан та, американецсенчен хӳтлĕх ыйтма тăрсан, Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсем хĕрхенсе тăма шутламаççĕ, тенĕ. Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен правительстви шухăшĕпе çавăн пек çынсен ĕçĕсене кирек хăшинне те хăй çĕршывĕнче пăхса тухмалла. Çавăнпа та ĕнтĕ Лаваль ĕçне те французсем кăна пăхса тухма тивĕçлĕ.

ШВЕЦИ ПРАВИТЕЛЬСТВИ ВЫРĂНТАН ТУХНИ

СТОКГОЛЬМ, июлĕн 31-мĕшĕ. (ТАСС). Швецири радио пĕлтернĕ тăрăх, Швецин коалициллĕ правительстви вырăнтан тухнă. Вара унта социал-демократсенчен тăракан çĕнĕ правительство туса хунă. Çĕнĕ правительствăна коалициллĕ правительствăн премьер-министрĕ пулнă Гамсон ертсе пырать.

КИТАЙ ПРАВИТЕЛЬСТВИНЧЕ ТУНĂ УЛШĂНУСЕМ

ЛОНДОН, июлĕн 31-мĕшĕ. (ТАСС). Чунцинран пĕлтернĕ тăрăх, ĕнер вырăнтан тухнă 12 кабинет членĕнчен вуннăшне каллех хăйсен вырăнне лартнă. Çапла вара ют çĕршыв ĕçĕсен çĕнĕ министрĕсĕр пуçне, правительствăра çĕрĕç министрне çеç çĕнĕрен лартнă.

Лăпкă океан çинчи вăрçă

ЛОНДОН, июлĕн 31-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: союзниксен Лăпкă океанăн кăнтăр-хĕвеланăç пайĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен пĕрлешӳллĕ командованийĕн штабĕ пĕлтернĕ тăрăх, Окинава утравĕ çинчи Америка самолечĕсем Хонсю утравĕ çинчи Куре портĕнче японецсен авианосецĕ çине бомбăсем пăрахнă. Каялла вĕçсе каякан летчиксем авианосец шыва путнине курнă. Нагасаки портĕнче кашни 10 пин тонна таякан 2 танкера шыва путарнă, е йывăр сиен кӳнĕ.

Борнео утравĕ çинче Австрали çарĕсем Джессельтон районĕнче атакăсем туса пынă.

ВАШИНГТОН, июлĕн 31-мĕшĕ. (ТАСС). США-н Лăпкă океанри флочĕн командованийĕн штабĕ пĕлтернĕ тăрăх, Куре порчĕ çине тата Япони тинĕсĕ хĕрринчи объектсем çине тапăннă чухне, авианосецсем çинче вырнаçакан союзниксен авиацийĕ японецсен грузсем турттаракан 24 суднине шыва путарнă тата 75 суднине сиен кӳнĕ. Японецсен 2 çĕнĕ авианосецĕ чалăшса кайнă, анчах путман. Тĕрлĕ сооруженисене, вăл шутра 9 фабрикăна пысăк сиен кӳнĕ. Японецсен 292 самолетне пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ. Америка авиацийĕн 27 самолет, акăлчансен—8 самолет пĕтнĕ.

ВАШИНГТОН, июлĕн 31-мĕшĕ. (ТАСС). США-н Лăпкă океанри флочĕн командованийĕн штабĕ пĕлтернĕ тăрăх, июлĕн 31-мĕшĕнче ирхине Америка эсминецĕсем Токио хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехри Суруга заливне кĕрсе Симидзу хулине пенĕ.

Июлĕн 29-мĕшĕнче Америкăпа Англи линкорĕсемпе крейсерĕсем Хонсю утравĕ çинчи Хамамацу хулине пенĕ.

ЛОНДОН, августăн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви панă хыпарсем тăрăх, союзниксен Лăпкă океанăн кăнтăр-хĕвеланăç пайĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен пĕрлешӳллĕ командованийĕн штабĕ августăн 1-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă. Америка самолечĕсем Японин Кюсю утравĕ районĕнчи суднисене атакăланă, вара вĕсем 6.000 тонна таякан пĕр транспорта, 2 грузовой суднăна, 1 танкера тата 2 моторнăй лодкăна пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ. Американецсен 3 самолет пĕтнĕ. Ытти самолетсем Японин Корея çыранĕ патĕнчи суднисене тапăннă. Вĕсем 2 экспорт суднине, 1 танкера тата 5 грузовой суднăна пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ. Американецсен тинĕс авиацийĕн самолечĕсем Барнео утравĕ патĕнче Японин 6 пĕчĕк суднине тата Малакка çыранĕсем çывăхĕнче 2 грузовой суднăпа 1 танкера шыва путарнă.

Австрали самолечĕсем Борнео утравĕнче японецсен çыранти сооруженийĕсемпе транспорт хатерĕсем çине бомбăсем пăрахнă.

Японецсен темиçе самолечĕ Борнео утравĕ çинчи Баликпапен районне тапăннă.

ВАШИНГТОН, августăн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен Лăпкă океан çинчи флочĕн штабĕ çапла пĕлтерет: июлĕн 30-мĕшĕнче кăнтăрла Америкăн 3-мĕш флотĕнчи самолетсем Нагоя районĕнчи аэродромсем çине, Хонсю утравĕнчи Майдзуру портĕнчи суднăсем çине бомбăсем пăрахнă. Çĕр çинче японецсен 56 самолетне пĕтерсе тăкнă тата 33 самолетне сиенленĕ. 1 эсминецпа 1 вăтам транспорта шыва путарнă, 1 çăмăл крейсера, 1 эсминеца, 2 вăтам тата 2 пĕчĕк грузовой суднăна сиенленĕ.

КĔСКЕН

▲ Американецсен Германири оккупаци влаçĕсем Баварири пысăк çуртсенчен пĕринче Рембрандт художник ӳкернĕ икĕ картина тупнă. Çав картинăсене нимĕçсем 1942 çулта, Гитлер приказĕ тăрăх, Германие вăрласа пынă пулнă.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РСФСР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн
УЛАТĂРТИ ЯЛХУÇАЛĂХ ТЕХНИКУМĔ

1945—46 вĕренӳ çулне техникумăн зоотехника тата бухгалтерипе экономика отделенийĕсен 1-мĕш курсне ВĔРЕНМЕ ИЛЕССИ ÇИНЧЕН ПĔЛТЕРЕТ

Техникумра 3 çул вĕренмелле.

Техникум çакăн пек специалистсене вĕрентсе хатĕрлет: ăратлă вылăх-чĕрлĕх ĕрчетекен фермăсемпе райçĕрĕç пайĕсен зоотехника участокĕсем, колхозсен таварлă фермисем тата колхозсемпе совхозсен ăратлă вылăх-чĕрлĕх фермисем валли вăтам квалификациллĕ зоотехниксем тата колхозсем, совхозсемпе МТС-сем валли бухгалтер-инструкторсем, бухгалтер-экономистсем.

Пĕрремĕш курса 14 çултан пуçласа 25 çула çитнĕ арçынсемпе хĕрарăмсене илеççĕ.

1944 çулта тата 1945 çулта çичĕ çул вĕренмелли шкултан отличник аттестачĕпе вĕренсе тухнисене техникума экзаменсăрах илеççĕ.

Ыттисене пурне те çичĕ çул вĕренмелли шкулăн программи тăрăх çак предметсемпе экзамен тыттараççĕ: вырăс чĕлхипе тата литературипе (çырса тата сăмахпа каласа), математикăпа (çырса тата сăмахпа каласа), СССР Конституцийĕпе (сăмахпа каласа).

Иккĕмĕш курса 1944—45 вĕренӳ çулĕнче вăтам шкулăн 9-мĕшпе 10-мĕш класĕнчен вĕренсе тухнисене илеççĕ.

Ялхуçалăх техникумне вĕренме кĕресси çинчен заявленисене 1945 çулхи июлĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа сентябрĕн 20-мĕшне çитиччен памалла. Заявленисене техникум директорĕ ячĕпе çырса вĕсемпе пĕрле çакăн пек документсем ярса памалла: ăçта миçе çул вĕреннине кăтартакан свидетельство, хăçан çуралнине кăтартакан свидетельство, автобиографи, виçĕ сăн ӳкерчĕкĕ, Хĕрлĕ Çар тĕлĕшпе мĕнле шутра тăнине кăтартакан справка (ăна çара каймаллисен ямалла), сывлăх çинчен врачран илнĕ справка. Документсене пурне те копийĕсене мар, хăйсене ярса памалла.

Вĕренме илмелли экзаменсем сентябрĕн 21-мĕшĕпе 25-мĕшĕ хушшинче пулаççĕ. Вĕренме кĕмелли экзаменсем панă вăхăтра заявлени панисене общежитие тӳлевсĕр вырнаçтараççĕ тата техникум столовăйĕнче кĕрес текенсен шучĕпе апат çитереççĕ.

Техникумра 1945 çулхи октябрĕн 1-мĕшĕнче вĕрентме пуçлаççĕ.

Хваттерсĕр студентсене техникум общежити тата выртса тăмалли вырăн (койкăпа матрац) парать. Техникумăн столовăй пур, столовăйĕнче подсобнăй хуçалăхран илнĕ апат-çимĕçпе апатлантараççĕ, 2-мĕш категорири рабочисемпе пĕртан çăкăр параççĕ.

Зачетсене вăхăтра парса пыракан пур студентсене те стипенди параççĕ.

Заявленисене документсемпе пĕрле çак адреспа ямалла: гор. Алатырь, ул. Щорса, 3, Сельхозтехникум.

Сĕнтĕрвăрринчи Вăрман техникумне çакăн пек дисциплинăсен преподавателĕсем кирлĕ: **геодези, вăрман таксацийĕ, древесиноведени, вăрман эксплоатацийĕ, столяр ĕçĕпе сĕтел-пукан производстви, металсен технологийĕ, теплотехника.**

Пур преподавательсене те хваттер параççĕ. Снабжени вăрман техникумĕн ОРС-ĕ урлă пулать.

Заявленисене диплома, автобиографипе тата кадрсене шута илмелли анкетăпа пĕрле çак адреспа ямалла: гор. Мариинский Посад, Майская, 30, директору Лесотехникума.

Шупашкарти Электромеханика техникумне грузовой машина çинче ĕçлеме шофер кирлĕ.

Пĕччен çынна общежитие вырнаçтараççĕ.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, Карла Маркса, 82.

Шупашкарти при-авăр фабрики çумĕнчи ФЗУ шкулĕ çакăн пек специальноçлă рабочисене вĕрентме илесси çинчен пĕлтерет: ткачсем, мастер помощникĕсем, ватерщицăсем, банкаброшницăсем, строительсем. 14 çултан иртнĕ çамрăксене илеççĕ. Вĕренме илнисене общежитие вырнаçтараççĕ, кĕпе-тумтир параççĕ, тӳлевсĕр виçĕ хутчен апат çитереççĕ тата уйăхне 75—40 тенкĕ стипенди параççĕ. Профессипе кура 9 уйăхран пуçласа 2 çул таран вĕренмелле.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, Ленинградская, 3.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместителĕн — 2—89, секретариатăн — 4—26, пропаганда пайĕн — 2—89, парти пурнăç пайĕн 3—39, промышленность пайĕн — 3—97, ялхуçалăх пайĕн — 3—99, рабселькорсен пайĕн — 0—67, издательство конторин — 0—23.

НТ 00186 Типографи ... Управлени ... полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2, ф. б. 59 42 п. п. Тираж 16.000